Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

67 (7707) № ✻ *Шăмат кун, 2009 çулхи августăн (çурла) 22-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Вĕрентӳ**



## Пĕлӳ тĕнчине чĕнеççĕ

***Педагогсем районти вĕрентӳ системин тĕп шăнăрĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем ачасене тарăн пĕлӳ панинчен малашлăх килет. Çавăнпа та вĕрентекенсем хăйсен пĕлĕвне çултан-çул анлăлатас, тарăнлатас тесе тăрăшаççĕ. Квалификацие ӳстерни, професси конкурсĕсене хутшăнни вара çĕнĕ вăй хушать.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан А.Г. Паладьева – «Çулталăкри учитель – 2009» районти конкурс çĕнтерӳçи. Вăл Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Çамрăк вĕрентекеншĕн ку çĕнтерӳ питĕ аван кăтарту. Татах та çӳллĕрех шайра иртекен конкурссене хутшăнма май парать вăл.***

***Тĕрлĕ грантсемпе ятсем çĕнсе илнĕ педагогсем те сахал мар районта. Вĕсене çитес ытлари кун, августăн 25-мĕшĕнче, вĕрентекенсен йăлана кĕнĕ августри конференцийĕнче чыслĕç. Педагогсем çинчен, районта вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ епле пыни çинчен вара паянхи номерĕн 5-мĕш страницинче тĕплĕнрех вуласа пĕлме пултаратăр.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Паян – Раççей Патшалăх Ялавĕн кунĕ**

## Раççей малашлăхне куратпăр

Паян Раççейре пурăнакансем Патшалăх Ялавĕн кунне уявлаççĕ. Çак уяв Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 1994 çулхи августăн 20-мĕшĕнчи 1714 номерлĕ «Раççей Федерацийĕн Патшалăх Ялавĕн кунĕ çинчен» Указран вăй илет. 18 çул каялла Раççей Федерацийĕн Верховнăй Совет Президиумĕ «РСФСРăн çĕршыв ялавне йышăнасси тата унпа усă курасси çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ çĕнĕ тапхăрти Раççей ялавĕн кунĕ. Раççей ялавĕ Мускавра Шурă çурт çинче пуçласа 1991 çулхи августăн 22-мĕшĕнче вĕлкĕшме пуçларĕ. Анчах шурă-кăваккхĕрлĕ ялавăн историйĕ пысăк. Малтанласа ăна Алексей Михайлович патша чухне (1645 – 1676 çулсем) «Орел» вырăс çар карапĕ çинче çĕкленĕ. Анчах Атăл тăрăх Астрахань таран ишсе аннă карапа ун чухне Степан Разин майлă каварçăсем çунтарса янă.

Триколор пуçаруçи Раççейшĕн пысăк ĕçсем пурнăçланипе историе кĕрсе юлнă Пĕрремĕш Петĕр патша. Вăл 1705 çулта январĕн 20-мĕшĕнче кăларнă Указпа ялавăн эскизĕсене хăй ӳкернĕ-ĕçленĕ те çак ялава суту-илӳ флотĕнче пурнăçа кĕртнĕ. Мĕне пĕлтерет-ха горизонтальлĕ виçĕ тĕс? Раççейре ĕлĕкренпех шурă тĕс Ирĕклĕхе пĕлтернĕ, кăвакки – çĕршыв хӳтĕлевçи шутланакан Турă амăшне, хĕрли – Вăй-хăвата.

**Çичĕ уйăх кăтартăвĕсем**

## Ял хуçалăхĕ

Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче ял хуçалăх предприятийĕсенче чĕрĕ виçепе 889 тонна аш-какай туса илнĕ, иртнĕ çулхин – 65,9 проценчĕ.

Сĕт ял хуçалăх предприятийĕсенче 5759,3 тонна туса илнĕ, иртнĕ çулхин – 88,1 проценчĕ.

Кашни 100 гектар çĕр пуçне хуçалăхсенче аш-какай 28,1 центнер (пĕлтĕрхин 90,9 проценчĕ), сĕт 181,7 центнер (123,1 процент) туса илнĕ.

Майракаллă шултра выльăх йышĕ те чакнă, паян хуçалăхсенче 5589 пуç (88,9 процент). Сыснасем - 6307 пуç (85,5 процент).

**«Вырма – 2009»**

## Çĕнтерӳçĕсем паллă

Районта вырма тапхăрĕ малалла пырать. Комисси унта хутшăнакан комбайнерсен «Вырма-2009» конкурсĕн черетлĕ тапхăрне пĕтĕмлетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн августăн 10-16-мĕшĕсенче **«АКРОС-530», «ДОН-1500» класлă** комбайнсем хушшинчи ăмăртура «Оринино» хуçалăхри Анатолий Петрович КУЗНЕЦОВ экипажĕ çĕнтернĕ тесе йышăннă. Вĕсем «Дон-1500» комбайнпа 394 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Иккĕмĕш вырăнта Суворов яч. хис. хуçалăхри Радонеж Виссарионович КУЗНЕЦОВ экипажĕ (348 тонна). Виççĕмĕш вырăнта «Герой» хуçалăхăн Валерий Васильевич ЕРДУКОВ экипажĕ (293 тонна).

**«Вектор», «Енисей-954», «Полесье» класлă** «хир карапĕсем» хушшинче пĕрремĕш вырăнта Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич НИКИТИН экипажĕ (428 тонна). Иккĕмĕш вырăнта 279 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ кăтартупа «Ударник» хуçалăхри Юрий Александрович ВАСИЛЬЕВ экипажĕ. Виççĕмĕш вырăнта «Ударник» хуçалăхри Владимир Алексеевич СТЕПАНОВ экипажĕ (275 тонна).

**«Енисей-1200» класлă** комбайнсемпе ĕçлесе пĕрремĕш вырăна Ильич яч. хис. хуçалăхри Юрий Петрович ЕГОРОВ экипажĕ тухнă (220 тонна). Иккĕмĕш вырăнта Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри Димитрий Вячеславович НИКИФОРОВ экипажĕ (155 тонна). Виççĕмĕш вырăнта Ильич яч. хис. хуçалăхри Владислав Иосифович АВРАМОВ экипажĕ (127 тонна).

**«Нива-СК-5» комбайнсемпе** ĕçленĕ çĕрте малти вырăна Ильич яч. хис. хуçалăхри Евгений Петрович ВАСИЛЬЕВ экипажĕ йышăннă (134 тонна). Иккĕмĕш вырăнта «Герой» хуçалăхри Лин Витальевич ИВАНОВ экипажĕ (97 тонна). Виççĕмĕш вырăна 94 тонна çĕнĕ тырă çапса тĕшĕлесе «Восток» хуçалăхри Николай Данилович ШАРИКОВ экипажĕ тухнă.

Çĕнтерӳçĕсене «Вырма-2009» эмблема тата 300 тенкĕ укçа свидетельстви, призлă вырăнтисене 200 (2-мĕш вырăн) тата 100 тенкĕ (3-мĕш вырăн) укçа свидетельствисене панă.

**Хамăр инф.**

## Уй-хирте

Чылай хуçалăхра вырма ĕçĕсем юлашки гектарсем çине куçаççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе 8971 гектар (70,1 процент) çинчен тыр-пул пухса кĕртнĕ. Чкалов яч. хис., «Ударник», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Герой», «Восток» хуçалăхсенче вырма юлашки гектарсем çине тухрĕ.

Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 24,8 центнерпа танлашать.

Вырма иртттернĕ лаптăкăн 76 процентне улăмран тасатнă.

«Герой», «Ударник», «ДаАн» хуçалăхсем 40 гектар (2,3 процент) çĕр улми кăларнă.

Кĕр аки валли 5341 гектар (97 процент) çĕр хатĕрленĕ.

Тăхăр хуçалăхра кĕр аки тума пуçланă, пурĕ 1231 гектар (22,4 процент) акнă.

Хуçалăхсем пĕтĕмпе 1063 гектар çĕртме сухи тунă.

**Район судĕнче**

## Йĕрке тума чăрмантарнăшăн

Çынсен Конституцире палăртнă прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлесси милици сотрудникĕсен тĕп задачи пулса тăрать. Çавăнпа та вĕсен ĕçне мĕнле те пулин майпа хутшăнни преступноçа хирĕç кĕрешессине сиен çеç кӳме пултарать. Общество вара милицисĕр – ятарлă управлени аппарачĕсĕр çирĕпленсе пыраймасть.

Милици сотрудникĕсене хирĕç тăвакан преступленисем те патшалăх влаçĕн сумне хавшатаççĕ. Çавăнпа пĕрлех влаç представителĕсен умне хăйсен тата тăванĕсен пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушлăх тухса тăрать. Каламалла, ытларах чух вĕсене хирĕç тăвакан преступленисем (вăй усă курнипе) ĕç тивĕçĕсене пурнăçланă вăхăтра пулса иртеççĕ. Нумайăшĕ Уголовнăй Кодексăн 318 статйинче кăтартнă преступление тунăшăн – ĕçе пурнăçлама чăрмантарнăшăн тата пурнăçпа сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратнăшăн – явап тытаççĕ.

Акă кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче район сучĕ А. Завьялов тата çул çитмен П. ĕçне тишкерчĕ. Вĕсене Уголовнăй Кодексăн 318 статйин 1 пайĕнче тата 319 статьяра илсе кăтартнă преступленисене тунăшăн айăпланă. Мĕнле ĕç-ха вăл?

**(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).**

**Кун йĕркинче – кĕр аки**

## Пахалăха тĕпе хурар

Лайăх тыр-пултан тухăç та вăйлă пуласси паллă ĕнтĕ. Çакна пурте пĕлетпĕр, анчах ăна шута хуманнисем те пирĕн хушăмăрта çук мар. Çав хушăрах районта пысăк пахалăхлă вăрлăх хатĕрлессипе çанă тавăрса ĕçлекенсем те пур. Кун пек хуçалăхсен кĕлечĕсем те кĕр çитсен туллирех пулнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.

Ял хуçалăх производство кооперативĕсенче акмалли вăрлăха имçамласси кун йĕркинче пулсан, юлашки вăхăтра йĕркеленекен хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе килти хушма хуçалăхсенче çак ответлă ĕç çине тимлĕх сахал уйăрни курăнать. Шупашкарти «Россельхозцентр» уйрăмĕ пирĕн районти хуçалăхсен кĕркунне акмалли тыр-пул вăрлăхне фитоэкспертиза туса пачĕ. Унпа килĕшӳллĕн пур вăрлăха та имçамласа акмалла.

Уйрăм ӳкерчĕксем çаплаpax. Тĕрĕслеттернĕ 700 тонна ытларах вăрлăхран 56 процентĕнче тĕрлĕрен чир-чĕр пуррине палăртнă. Вĕсен шутĕнче кăвакарнипе 54-90 процент, бактериоз 1-23 процент, фузариоз 1-5 процент, альтернариоз 1-7 процент тупса палăртнă. Кун пеккисем Суворов яч. хис., «Ударник», «Передовик» тата ытти хуçалăхсенче те пур. Вĕсене тĕрлĕрен химилле тата биологилле препаратсемпе имçамламасăр акмалла мар.

Паян химилле препаратсене нумай çĕрте сутнине асăрхасан кунта та асăрханусăр пулмалли пирки аса илтерес килет. Çак препаратсене ятарласа сутакан, темиçе çул ĕçлесе кăтартнă организацисенче çеç илмелле. Ахальлĕн укçана çилпе вĕçтерни кăна пулма пултарать.

Пучах çинчи тĕрлĕ чир-чĕрпе кĕрешме те химилле препаратсен усси лайăхрах. Кунта чир-чĕре кура препаратсене суйласа илни аван. Тымар çĕрĕкĕнчен сыхланма тата калчасем лайăхрах аталанччăр тесен «Планриз» биологиллĕ препаратпа усă курмалла. Унпа пĕр тонна вăрлăх имçамлама пĕр литр препаратпа усă курмалла. Имçамлас ĕçе акас умĕн 2 кун маларах ирттермелле. «Планриза» пур химилле препаратсемпе те хутăштарма юрать. Имçамсемпе ĕçленĕ чух хăшĕсемшĕн дотаци пуррине шута илмелле. Районта ку ĕçре 1 миллион та 400 пин тенкĕ саплаштарма пăхнă пулсан, пĕр миллионне илнĕ ĕнтĕ. Тепĕр 400 пин тенкĕлĕх документсем тăратассине кая хăварас марччĕ.

Имçамлас ĕçре çак препаратсемпе тата çак виçепе усă курмалла. Ыраш валли «Винцит» (тонна çине 1,5-2 литр), «Премикс» (1,2-1,5 кг), «Дивидент СТАР» (1кг). Кĕрхи пусăсене хĕл каçма кĕртиччен фундазол (2-2,5 кг) сапни усăллă.

Тĕрлĕрен имçамсемпе ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла. Вĕсемпе ĕçлеме ятарласа хатĕрленĕ çынсене çеç явăçтармалла.

**А. СЕМЕНОВ, «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.**

**Саламлатпăр**

Хамăрăн хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, кукамая, аппана – Турай ялĕнче пурăнакан **Таисия Ивановна ДМИТРИЕВАНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çак паллă кун ячĕпе саламласа сана пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Ачусемпе мăнукусем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Эсĕ хамăрпа юнашар пулнишĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата пĕчĕк прамăнукĕ, йăмăкĕ.**



Хаклăран та хаклă аннене, мăшăра, аппана, йăмăка, кукамая, асаннене, тăхлачăна, хунямана – Ойкас ялĕнче пурăнакан **Надежда Викторовна ГАВРИЛОВАНА** паян 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Хаклă аннемĕр, эсир пире пурнăç парнелерĕр, ура çине çирĕппĕн тăратрăр, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшрăр. Эпир сана ăшă кăмăлушăн, пур вăхăтра та пире пулăшма май тупнишĕн тав тăватпăр. Ырми-канми хăвăн сывлăхна, вăйна шеллемесĕр паянхи кунччченех Мăн Хураçкари çыхăну уйрăмĕнче ĕçлерĕн. Тавах сана пуриншĕн те, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, тăхлачисем, мĕн пур тăванĕсем.**